Эй, чăваш ăрăмçи!
Халь санпа вăй илет Пултару,
Акăшпи пек утать куçунта вăл: пулаймĕ чару!
Шухăшу та ăсу тихалла ихĕрсе чупнăран,
савăнатпăр эпир: сан алра тĕп чăвашăн тĕнчи,
Янăравлă тĕссем кайăкла чĕвĕлтетрĕç чи-чи!
Эс ăсталăх ани умĕнче ĕшенÿллĕн тăран.

(Н. Петровский В. Агеев художника халалласа çырнă сонет ярăмĕ).

Республикăра Владимир Иванович Агеев ӳнер ăстин ятне илтмен çын çук та пулĕ. Пирĕн ентеш, Елчĕк таланчĕ чăвашсен тава тивĕçлĕ художникĕ, К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх премийĕн лауреачĕ. Владимир Агеев ку таранччен икçĕр ытла кĕнеке валли ултă пине яхăн тĕрлĕ ӳкерчĕк тунă. «Капкăн» журналта унăн 500е яхăн карикатури кун çути курнă. «Хатĕр пул», «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенчи ӳкерчĕксене те нумайăшне Агеев аллинчи сăрăсемех ăсталанă. В. Агеевăн картинисем республикăра çеç мар, Пĕтĕм Раççейĕпех саланнă. Вăл хăйĕн ĕçĕсемпе çĕршыври нумай-нумай выставкăсене хутшăннă. Унăн 20 ытла ĕçне СССР, РСФСР Художникĕсен союзĕн выставкисен дирекцийĕ илнĕ, Германири музейсенче те пирĕн чăваш ӳнерçин, Агеевăн çирĕме яхăн картини упранать.

— Ытларах мĕнле тематикăллă картинăсем ӳкерме кăмăллатăр эсир, Владимир Иванович?

— Чăваш халăхĕн авалăхĕпе йăла-йĕркисене ăсталатăп. Манăн тĕп тĕллев — чăваш халăхĕн историйĕн кун-çулне кăтартса парасси, чăваш колоритне аталантарасси.

— Хальхи вăхăтра эсир мĕнле картинăсем ăсталатăр? Мĕнле тематика?

— Юлашки кунсенче кĕнекесем валли иллюстрацисем тата çынсен портречĕсене ӳкеретĕп, карикатурăсем тăватăп. Карикатурăна политикăпа çыхăнтарса паянхи пурнăçра пулса иртекен улшăнусене ăсталатăп.

— Владимир Иванович, мĕнле ăсталанать-ха сирĕн картина. Мĕнрен пуçланать-ха вăл е ку жанра суйласа илесси? Тата ӳкерчĕк ăсталама мĕн-мĕн пĕлмелле-ши?

— Темăсене эпĕ хам пуçран шутласа тупмастăп, вĕсем пурнăçра кашни утăмрах. Вĕсене курма çеç пĕлмелле. Ытларах мана пейзаж мар, çынсен сăнне ӳкерсе кăтартма килĕшет. Çын сăнне ӳкерес пулсассăн малтан унăн психологине аван пĕлмелле.

— Пуçламан ĕçе малалла тăсса леме килĕштеретĕп. Пĕччен. Манăн нормăланă ĕç кунĕ çук. Хăш чух çĕрĕпех, кунĕпех ĕçлетĕп, ӳкеретĕп. Нумай каççем мастерскойрах иртеççĕ. Мĕншĕн тесессĕн искусство маншăн — пурнăç тĕвви. Манăн ĕçлес кăмăл яланах пур. 64 çула çитсе эпĕ кичемлĕх мĕнне туйса курман. Яланах ĕçлетĕп, ĕçлетĕп, ĕçлетĕп. Туйăмсем ман яланах шыраврă. Пурнăç чăнлăхне шыратăп.

—Владимир Иванович, республика юлашки вăхăтра çамрăк художниксемпе пуянланма пуçларĕ. Сире ытларах камсем килĕшеççĕ?

ПИРĔН ЕНТЕШСЕМ — ИСКУССТВО ÇЫННИСЕМ

# «Художник вăл ăста психолог та»

Кирлĕ пек композици шутласа тупмалла. Картина тăвасси вăл — роман çырассипе пĕрех. Живопись ӳкернĕ чух хими, физика, оптика пĕлмелле. Хăш чух живописĕн законĕсене веçех пăхăнса ĕçлетĕп. Анчах та результачĕ нимĕн те çук. Пĕтĕм виçесене ним вырăнне хумасăр, туйăмпа, чунпа ныpсассăн вара ăнсăртран килсе тухать ӳкерчĕк Мĕн-ши вăл искусство, улттăмĕш туйăм-ши? тесе шутласа ларатăп вара. Леонардо да Винчи çапла каланă: «Из всех наук самый сложный и самый тяжелый это — живопись». Живописре пĕтĕм наукăсен концентрацийĕ. Çавăнпа та çынна художество шкулне пĕтерсен пиçсе тухнă художник пулса тухрĕ теме çук. Каларăм ĕнтĕ, художникăн питĕ нумай пĕлмелле: литературăна, искусствăна, психологие, философие, балет искусствине, художникăн анлă тавракурăмлă пулмалла. Художник пулма турă пани те чылай кирлĕ.

—Владимир Иванович, эсир кунăн хăш вăхăтĕнче ĕçлеме кăмăллатăр?

— Ытларах эпĕ ирхине ĕçлеме килĕштеретĕп. Пĕччен. Манăн нормăланă ĕç кунĕ çук.

— Мана çамрăк художниксем ӳсни савăнтарать. Николай Бантаев, Станислав Михайлов, Юрий Матросов, Юрий Ювинорьев, Владислав Зотиков тата ыттисем те чăваш ӳнерлĕх искусствине аталантарассишĕн чылай тăрăшаççĕ.

— Художник... Мĕнле çын пулмалла-ха унăн?

— Чи малтанах художникăн чăн-чăн çын пулмалла. Çынлăх пĕтсессĕн сана турă нимĕн те памасть. Таса çын пулма питĕ йывăр. Çавăнпа та художникăн ытларах пĕчченлĕхре пулма тăрăшмалла. Художникăн ырă хум яракан точка пулмалла — карикатурăра та çаплах. Таса çын пулаймасăр 95 процент художник урăх еннелле куçса каять. Хăшĕсем çемье еннелле куçса каяççĕ. Чăн-чăн искусство çыннин искусствăна пĕрремĕш вырăна хумалла.

— 1994 çулта «Хыпар» хаçатра эсир «Чăн-чăн искусство çыннин авланмасăрах пурăнма вĕренмелле» ятлă интервью панăччĕ. Халĕ те шухăшсем улшăнман-и?

— Çапла. Искусство вăл хăй пĕтĕм чун чĕрене çавăрса илет. Унта урăх çын валли вырăн çук. Искусство вăл — юрату. Икĕ çынна пĕр харăс юратма çук-çке. Çемье вăл искусствăран аяккалла пăракан япала çеç.

—Мĕнле чун апачĕпе тăранса пурăнатăр-ха эсир?

— Художниксен чун апачĕ яланах пур. Хамăр чăваш поэчĕсен сăввисене, Çеçпĕле, М. Федорова, П. Хусанкая, А. Воробьева вулатăп. Вĕсем мана тĕрлĕ картинăсем тума пулăшаççĕ. Лермонтов, Пушкин, Тургенев кĕнекисем те яланах ман çумра. Ют çĕршыв графикипе, живописĕпе паллашатăп.

— Эсир ытларах хăш писательсен произведенийĕсем валли ӳкерчĕксем тума кăмăллатăр?

— Иллюстраци тунă чух пирĕн çапла ăста писательсем пурри мана савăнтарать. Хĕветĕр Агивер произведенийĕсемпе ĕçлеме уйрăмах килĕшет. Çав вăхăтрах начаррисем те пур: композици тума пĕлмеççĕ. Çакăн пирки мана та ĕçлеме питĕ йывăр.

— Нумай искусство çыннисен творчество тапхăрĕ темиçе пая пайланать. Пикассон 4—5 тапхăр пулнă, тĕслĕхрен: сирĕн ӳнер искусстви те çаплах-и?

— Манăн ӳсĕм çулĕ çинче пайланнă тапхăрсем çук. Вăтăр çул каялла мĕн ӳкернĕ, халĕ те çав тематикă — чăн чăваш кун-çулĕ.

— Владимир Иванович, юлашкинчен мĕн сĕннĕ пулăттăр эсир ăста художник куçĕпе çамрăк ӳнерçĕсене?

— Чăваш йывăççин чăвашлах ӳсмелле. Чăвашла курнине чăвашлах ӳкермелле. Искусствăна хамăрла, чăвашла курма пĕлесчĕ. Искусство вăл националла пулăм. Чăвашлăх искусствине аталантарасчĕ. Чăваш пулни, чăвашла курни пĕрре те начар япала мар. Халăхăн искусствине пур енлĕ аталантармалла.

Ирина БАКЕЕВА,
Оксана ВОРОБЬЕВА,
Чăваш патшалăх университечĕн студенткисем.